Иванов К.В. Вăрманти çилтăвăл ; Çулла ; Туй : [сăвăсем : «Нарспи» поэма сыпăкĕсем] / К.В. Иванов // Çутталла : «Букварь» хыççăн вуламалли 1-мĕш кĕнеке. – Шупашкар, 1923. – С. 92, 134, 138.

# Вăрманти çилтăвăл.

Шавлат̆, кашлат̆ сĕм вăрман,
Вĕçĕ хĕрри курăнмаст̆,
К̇утсăр пуççăр çил тухсан,
Ђарăнассăн туйăнмаст̆.
Шавлат̆, кашлат̆ сĕм вăрман,
Тамăкри пек ахăрат̆.

Те арçури, те шуйттан
Çав терийех ашкăнат̆.
Т̆апхăр тапхăр çил килет
Пăлтăр пăлтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ўхĕрет,
Çĕре çитех авăнса.

# ÇУЛЛА.

## Çулла.

Акă ĕнтĕ çўла. Кунĕсем шăрăх. тăтăшах уйар та типĕ тăраççĕ. Çăмăр сайрахутран кăна çукалаť. Хĕвелĕ çанталăк тўпинех хăпараť те, анса ларма васкамасť. Вăрăм кунсем хыççăн кăшт каç пулнă пек пулаť: каçхи шуçăм сўнме те ĕлкĕреймест,—ирхи çурăмпуç хăпарма пуçлаť. Хĕвел сикес тухаť, каллех кун пулаť. Ĕçţен хресţен ку вăхатра шăнţăк пекех, ыррăн çывăрма та пĕлмест. Хĕвел тухсанах тăраť те, мĕн те пулин ĕçе тытăнса, вăл ţаваланма тапратаť.

**Ыйтусем:** Çу уйăхĕнţе хресţеншĕн мĕлле ĕççем пулаççĕ?

## Çулла.

Хĕвел тухаť, улăхаť
Çўлĕ тусем тăррине.
Хăй çуттипе ăшăтаť
Таçти таçти çĕрсене.
Пур тĕнţери ţĕрĕ ţуп

Ţашлаť, сикет, савăнаť.
Йаţĕç йура йурласа
Сĕмвăрманти кайăксем.
Акăшшем пек йарăнса
Анţĕç шыва сар хĕрсем.

## Çулла паллисем.

Çуркунне хыççĕнех çулла пуçланаť. Çăвăн кунĕсем нитĕ вăрăмланса çитеççĕ, çĕрĕсем кĕскелсе йулаççĕ. Кăнтăрла хĕвелĕ вирлĕн хĕртнипе, çĕр çумĕнţе выртакан ţулсем, хăйăрсем вĕриленсе кайаççĕ. Пур йăвăççем те çара çулçăсемпе витĕнеççĕ. çаранлăх тĕплĕм курăксемпе йешĕрет, серем сиййĕсем тĕрлĕрен ţеţекпе илемленсе выртаççĕ. Кайăк кĕшĕксем ţĕпписене кăлараççĕ. Вăрмансенţе, уйхирсенţе шутсăр хурткăпшанкă тухса вĕшĕлтетме пуçлаť. Кĕçех çырли те пиçет, пахча çимĕçĕсем те пулаççĕ. Тыррипулли тĕшĕленсе çитсе, селĕм пуţаххисене çĕр çумнелле тайаť. Йал çыннисен вĕçевĕçĕ уй ĕçĕсем пуçланса кайаççĕ: çĕртме сухине тумалла, çаранне çулмалла, унтан тыррисене вырса, вĕсене анкартине кўртсе нуçтармалла пулаť.

**Ыйтусем:** Çулла пуласине мĕлле паллăсем пĕлтереççĕ? Çу кунĕсен мĕнтен илемлĕ пек туйăнаť?

# Т у й.

Шăнкăр шăнкăр шăнкăрав
Шăнкăртататӗ çулпала:
Хӗртуй килет çӗмӗрсе
Урам тăрăх йалпала.
Вунă арăм хушпупа
Сăран кӳме сийӗнҫе.
Хӗрӗх виçӗ урапа
Сăран кӳме хыçӗнҫе.
Çиҫӗ çӗрте урамра
Ҫарăнҫӗç туй сыннисем.

Хирӗç тухрӗç сăрапа
Хушăлкари та итăшшем.
Йурлаççӗ те кӗреççӗ.
Ырă кӗрӳ хапхинҫен.
Есеççӗ те çийеççӗ
Инçе çулсем хыçӗнҫен.
Кантарла та çитменха.
Касҫен вăхăт нумайха.
Касăпулиҫҫен туй тумз
Пире вăхăт нумайха.